Пăшăрхану

Этем пĕр вĕçĕмсĕр ĕçлет вăй пур чухне.
Хевти пĕтсессĕн те шутлать ĕç пиркиех:
Пурнăçлайман иккен вăл чи кирлисене...
Епле кулянмăн-ха? Сăлтав çителĕклех.

Илмест асне те вăл çак эрлĕ вăхăтра,
Этем тĕнчин йĕркийĕ-çке — хăйне кура:
Вăл пысăк çын-и е пĕчĕк çын-и –
пурпĕрех
Пурнăçланман ĕçсем юлаççĕ кашниннех.

Юлаççĕ çав, юлаççĕ сахал мар вĕсем –
Малаш тĕллевлĕ, илĕртӳллĕ ĕмĕтсем.
Çав ĕçсене йăлт пурнăçлас тăк çĕр çинче,
Çăтмах пек чаплă пулĕччĕ мĕнпур тĕнче.

1998

Галкин, А. Пăшăрхану // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 309.